28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ОКТЯБРЬ 7 ВЫРСАРНИКУН 195(6946) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТНЕ СУЙЛАССИ ÇИНЧЕН

Вăрçă пĕтнĕ май тата СССР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн полномочийĕсен срокĕ тухнă май, «СССР Верховнăй Советне суйласси çинчен калакан положени» 72-мĕш статьипе СССР Верховный Советне суйламалли кун çинчен суйлавсем пуçланиччен икĕ уйăхран кая юлмасăр пĕлтермелле тата суйлавсене [illegible] кун ирттермелле тесе калани тăрăх, Совет Социализмлă Республикисен Союзĕн Верховнăй Совечĕн Президиумĕ ÇАПЛА ЙЫШĂНАТЬ:

СССР Верховный Советне 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче вырсарникун суйламалла тăвас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи октябрĕн 5-мĕшĕ.

Хăвăртрах авăн çапса пĕтерер

Тырпула уйран пухса кĕртес пĕтерне колхозсем шучĕ кулленех ӳсе пырать. Анчах та ваттисем: тырпула пухмене хурсан тин мухтама пултаратăн, тенĕ. [illegible] пухса кĕртнĕ тырпула пĕр так-калмасăр пухмене хывас тесен, ăна хăвăртрах авăн çапмалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1945 çулта тырпула пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире тырă вырма пуçласан 5 кунран кая юлмасăр авăн çапма тытăнма, авана васкаллăн çапассине [illegible] асăрхаттарчĕç. МТС-семпе колхозсен тата совхозсен мĕнпур сложнăй молотилкисемпе тата лашапа ĕçлекен молотилкăсемпе талăкĕ-талăкĕпех ĕçлеттерме хушрĕç. Партипе правительствин [illegible] постановленине [illegible] пурнăçласа пынине пула, республикăри [illegible] авăн çапас ĕçе [illegible] организацилемелле. [illegible] колхозсем государствăна тырă парса татрĕç, МТС-сем [illegible] планне тултарнине [illegible]

Вăрнар районĕнче 10 колхоз авăн çапса, 22 колхоз капан хывса пĕтернĕ. Районра октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парас планне 100 процент тултарнă. Халĕ планран ирттерсе çĕршер центнер тырă парассĕ. Красноармейски районра 28 колхоз капан хывса, 8 колхоз авăн çапса пĕтернĕ. Государствăпа тырă парса татнă колхозсем 20 ытла шутланаççĕ. Авăн çапас ĕçре колхозсене МТС-сем пысăк пулăшу памалла. Ку тĕлĕшпе Вăрнар, Вăрмар, Элĕк МТС-сĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Анчах та авăн çапас ĕç уйрăмах Улатăр, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Чкаловски, Çĕмĕрле, Елчĕк тата ытти хăшпĕр районсенче начар пырать. Çак районсенче пĕтĕм тĕштырăсенчен суррине яхăн кăна çапнă. Советски, Чурачăк, Сĕнтĕр, Етĕрне районĕсенче те авăн çапас ĕç çителĕксĕр пырать.

Авăн çапас ĕç хăшпĕр районсенчи чылай колхозсенче мĕншĕн начар пырать? Чи малтанах çак ĕçре МТС тата лашасемпе ĕçлемелли колхоз молотилкисемпе туллин усă курмаççĕ, талăкĕпех авăн çапассине организацилемен. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Красный Четай» колхозра МТС-ăн сложнăй молотилки пур, анчах ăна 5 кун хушши ĕçсĕр лартнă. Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕн ытти молотилкисем те колхозсенче кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ çак МТС авăн çапмалли плана 10 процент ытларах кăна тултарнă. Ишлей МТС-ĕн 14 молотилка, 9 комбайн пур. МТС комбайнсемпе тырă вырмалли плана 39 процент, авăн çапмалли плана 20 процента яхăн тултарнă. МТС-ри Владимир Егоров ертсе пыракан 7-мĕш бригада çу каçиччен пĕтĕмпе те 10 тонна кăна çапнă. МТС-ри пĕр молотилкăпа та 100—120 тоннăран ытла çапман. Ыйтас килет: МТС директорĕ Рязанов юлташ колхозсенче авăн çапас ĕçе хăçан организацилеме шутлать-ши? Рязанов хăйĕн çаврăнăçусăрлăхĕшĕн Тăван çĕршыв умĕнче ответ тытассине систе-ши? Ишлей районĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхозра колхозниксем хăйсен вăйĕпех авăн çапса пĕтернĕ. Вĕсем кăнтăрла кăна мар, çĕрле те авăн çапнă. Çак колхозпа юнашар Анат Кинерти «Прожектор» колхозра вара 4 кун хушши МТС комбайнне ĕçлеттермесĕр лартнă. Хăйсен молотилкине юсаса ĕçе яман, колхозра ĕçлеме пултаракан çынсене те авăна тăпачпа çапма явăçтарман. Колхоз председателĕ Потянов юлташ авăн çапса государствăна тырă парас ĕçе кирлĕ пек организацилемен. ВКП(б) Ишлей райкомĕ те, райисполком та районри çак çитменлĕхсене курассĕ, анчах авăн çапас ĕçе кирлĕ пек организацилес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çавăн пекех Октябрьски, Сĕнтĕр, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри МТС-сĕсем те авăн çапас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Малалла авăн çапас ĕçе тăсса пынипе нимпле те килĕшме çук. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, октябрь уйăхĕ государствăна тырпул, çĕрулми тата пахчаçимĕç пĕтĕмпех парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăхлăх пулса тăрать. Çак уйăхлăхра кашни колхозрах авăн çапса пĕтермелле. Кашни колхозрах авăн çапас ĕçре пур тĕрлĕ молотилкăсемпе те усă курмалла, тăпачăпа çапассине организацилемелле, çак паха ĕçе кĕске вăхăтра туса пĕтерес тесе, пĕтĕм вăя мобилизацилемелле. Авăн çапас ĕçе хăвăртлатас тесен мĕн тумалла-ха? Чи малтанах пур тĕрлĕ молотилкăсене, ĕç тата туртăм вăйĕсене шута илсе, кашни колхоза пилĕккунлăх заданисем памалла, ăна пурнăçланине тĕрĕслесе пымалла. Уйрăм колхозсем юлса пыраççĕ пулсан, вĕсене çийĕнчех пулăшу памалла. Авăн çапмалли график кашни колхозшăн закон пулса тăмалла, графика пурнăçласа пырассишĕн пур колхозсен те пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле. Комбайнсем пур тĕлте те тырă вырса пĕтернĕ, вĕсемпе авăн çапнă çĕрте усă курмалла.

Партипе правительство колхозсен тырпулне пухса кĕртнĕ çĕре ялта пурăнакан мĕнпур çынсене мобилизацилеме ирĕк панă. Çак законпа усă курса, ĕç вăйĕ çитмен колхозсене яма район центрĕнчи тата хулари çынсене мобилизацилемелле.

Авăн çапасси—тырпула пухса кĕртес ĕçĕн юлашки татăклă тапхăрĕ. Ĕçе организацилеме пĕлни авăн çапас ĕçе татса парать. Кашни колхозрах ятарласа авăн çапакан бригадăсем тумалла, вĕсене авăн çапса пĕтеричченех ытти ĕçе яма пачах чармалла.

Авăн çапнă чухне пур ĕçре те уйрăм сдельщина тумалла. Авăн çапакан бригадăсене çителĕклĕ таран туртăм вăйĕ уйăрса памалла, çак ĕçре колхозăн тата колхозниксен кӳлсе ĕçлеме вĕрентнĕ майракаллă шултра выльăхĕсемпе туллин усă курмалла.

Уйрăм районсенчен тырра тарасапа йĕркеллĕ турттарса кĕртменни çинчен пĕлтереçĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем Комсомольски, Шăхасан районĕсенчи колхозсенче пур. Тырра шута илессине кирлĕ пек йĕркелеменни, итемре е турттарнă чухне тырпула тăккаласа пĕтерни Тăван çĕршыв умĕнче айăпа кĕни пулать. Тырпула çирĕп сыхламалла, хиртен пуçласа пӳлмене кĕриччченех тыррăн кашни килограммне пĕтĕмпех шута илсе пымалла.

Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем Кубань таврашĕнчи колхозниксем тырпул пухса кĕртессишĕн пуçласа янă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине октябрь уйăхĕнче авăн çапса пĕтерме, государствăна тырă парса татма обязательство илчĕç. Октябрь уйăхĕ—авăн çапас ĕçе татса паракан уйăх. Хамăр çине илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçа кĕртес тесе, çапла вара Тăван çĕршыва ытлăнситлĕн апат-çимĕç тата чĕртавар парас тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлер.

Октябрь уйăхĕ—государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăх

РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ĔÇ ОКТЯБРĔН 5-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă панă
1. Вăрнар	100,3
2. Советски	83,6
3. Сĕнтĕр	82,7
4. Муркаш	81,2
5. Етĕрне	81,1
6. Чурачăк	79,5
7. Шупашкар	78,1
8. Красноармейски	76,9
9. Çĕрпӳ	76,4
10. Сĕнтĕрвăрри	75,2
11. Вăрмар	75,1
12. Шăхасан	73,7
13. Калинино	72,9
14. Пăрачкав	72,5
15. Элĕк	71,2
16. Октябрьски	69,9
17. Куславкка	67,2
18. Ишлей	67,1
19. Йĕпреç	66,5
20. Первомайски	66,2
21. Елчĕк	64,2
22. Канаш	63,8
23. Чкаловски	63,4
24. Комсомольски	62,4
25. Çĕмĕрле	55,7
26. Шăмăршă	55,6
27. Улатăр	55,5
28. Тăвай	54,1
29. Хĕрлĕ Чутай	52,4
30. Кувакино	40,7

Çитĕнӳсемпе лăпланса лармалла мар

МУРКАШ. Октябрĕн 6-мĕшĕ тĕлне районра 32 колхоз государствăна тырă парса татнă. «1-ое Мая», «Авангард», «Восток», Свердлов ячĕпе тăракан колхозсем планран ирттерсе 50-шар центнер тырă панă.

Анчах та район юлашки пилĕккунлăхра государствăна тырă памалли графика тултараймарĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕпе 5-мĕше хушшинче районăн 300 тонна тырă леçмелле пулнă пулсан, 150 тонна çеç леçнĕ. Уйрăмах Панкли, Йӳçкасси, Шетмĕпуç ял Совечĕсенчи колхозсем кайра пыраççĕ. Панкли ял Советĕнчи «Зерно» колхоз 447 центнер вырăнне 90 центнер çеç леçнĕ. «Венера», «Звезда», «25 лет Чувашии», «Комбайн», «Тиуши» колхозсем тырă памалли плана 50—60 процент çеç тултарнă. «Танк» колхозра тырра салатма пуçланă. Çак колхозра ВКП(б) райкомĕпе райисполкомăн уполномоченнăйĕ пулса коммунист Арсентьев ĕçлет. Вăл колхоз тыррине салатма чарас вырăнне хăй те колхозран укçалла 6 пăт тырă илнĕ. «Танк» колхоз (председателĕ Грачев юлташ) паянхи куна 60 центнер государствăна тырă парса татман.

Районăн октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана тултарма пур условисем те çителĕклĕ. Ĕçе тĕрĕс организацилесе, пикенерех ĕçлени кăна кирлĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

ÇĔРУЛМИ ПАРСА ТАТНĂ

Первомайски районри Канашелти «Красноармеец» колхоз (председателĕ И. Долгов юлташ) пахчаçимĕçсене пухса кĕртнĕ. Çĕрулми кăларнă çĕрте комсомолецсем лайăх ĕçлене. Колхоз çĕрулми кăларса пĕтернĕ тата государствăна та парса татнă.

Вăрлăхлăх çĕрулмипе пахчаçимĕçсене ятарласа тунă подвала хунă.

Çавăн пекех «Красное Именево», «Искра», «Заря» колхозсенче те государствăна çĕрулми парса татнă, вăрлăхлăх çĕрулмипе подвалсене хунă.

35 колхоз тырă парса татнă

СĔНТĔР, октябрĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăхлăха хутшăнса, районри колхозсем çак ĕçсене чылай лайăхлатрĕç. Паянхи куна районри 90 колхозран 35 колхоз государствăна тырă парса татнă. Государство планне пĕтĕмпех татас тесен, районăн тата 600 тоннăна яхăн тырă памалла. Çак тырра эпир çитес 5—6 кун хушшинче парса татассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлетпĕр. Çак задачăна пурнăçлас тесе, колхоз председателĕсене пулăшу пама кашни колхозах ВКП(б) райкомĕн уполномоченнăйĕсен ятăмăр. Государствăна çĕрулми тата пахчаçимĕç парса татнă колхозсем те нумай.

Нумай колхозсем планран ирттерсе тырă параççĕ. «Правда» колхоз 80 центнер, «Новая юнга» колхоз 50 центнер, «1905 год» колхоз 30 центнер, «Первое Мая» колхоз 12 центнер леçсе панă.

«Правда» колхоз (председателĕ Илугин юлташ) сентябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне тырă парса татрĕ, октябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне Хĕрлĕ Çар фондне 500 пăта яхăн пачĕ. Çак колхоз государствăна тырпул кăна мар, çĕрулми, пахчаçимĕç, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем те пĕтĕмпех парса татрĕ. Паянтран авăн çапса пĕтерет.

Ленин ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулсенче юлса пыратчĕ. Колхоз председателĕ Суворов юлташ кăçал пур тĕрлĕ ĕçе те уйрăм сдельщинăпа организацилерĕ тата ĕçлеме пултаракан колхозри пĕтĕм вăя тырпул пухса кĕртес ĕçе мобилизацилерĕ. Кунта ĕç дисциплини те çирĕп. Çавна пула колхоз пур ĕçе те вăхăтра тата лайăх пахалăхпа тăвать. Колхозниксем хушшинче массăллă-агитацилле ĕçе кашни кун туса пыраççĕ. Колхоз государствăна 505 центнер тырă леçсе плана тултарчĕ, ун хыççăн Хĕрлĕ Çар фондне 600 пăт ытла пачĕ.

Октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă кăна мар, çĕрулми тата пахчаçимĕç те парса татассишĕн, хамăр çине илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн колхозниксемпе колхозницăсем кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ.

С. СОКОЛОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Авăн çапас тата çĕртме тăвас тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлемелле

Елчĕкри МТС хăйĕн çулталăкри планне 121 процент тултарчĕ. П. Марков ертсе пыракан бригада малта пырать. Çак бригада хăйĕн планне 215 процент тултарнă. Бригадăри трактористсем Маркелов, Евдокимова, Константинова, ХТЗ тракторпа ĕçлесе 225—230 процент тултарнă. Струнков ертсе пыракан бригада хăйĕн планне 280 процент тултарчĕ, 1240 гектар вырăнне 2481 гектар сухаларĕ. Е. Осипова, Е. Цыганова трактористкăсем хăйсен планне 215—220 процент тултарчĕç. Çавăн пекех 6-мĕш бригада (бригадирĕ А. Павлов) çулталăкри плана 160 процент, 5-мĕш бригада (бригадирĕ А. Гордеев) 151 процент тултарчĕç.

9-мĕш бригада (бригадирĕ С. Васильева), 15-мĕш бригада (бригадирĕ А. Филиппов), 12-мĕш бригада (бригадирĕ Ф. Якимов) хăйсен çулталăкри планне 180—185 процент тултарнă.

Анчах МТС ĕçĕнче çитĕнӳсемпе пĕрлех çитменлĕхсем те пур. Акă МТС комбайнсемпе вырмалли плана тултараймарĕ. 3000 гектар вырăнне 2007 гектар анчах вырса пухнă. Авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас ĕç те çителĕксĕр пырать. Çак çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

И. ИГОЛКИН.

Иртнĕ çулхинчен лайăхрах

Етĕрнери МТС комбайнсемпе тырă вырса пухмалли плана кăçалччен пĕрре те тултарман. Кăçал комбайнсемпе вырмалли плана 146,5 процент тултарнă. Уйрăм комбайнерсемпе комбайнеркăсен ĕç тухăçлăхĕ татах та пысăкрах. В. Лаптев комбайнер 120 гектар вырăнне 234 гектар вырса пухса, плана 195 процент, З. Хиноварова комбайнерка 192 процент, В. Токсубаев 175 процент тултарнă. Плана тултарман комбайнерсем çук.

Тракторсемпе тумалли ĕçсен планне те МТС лайăх тултарса пырать. С. Смирнов ертсе пыракан 5-мĕш бригада çулталăкри плана 104 процент тултарнă. Смирновпа Кованько бригадисенчи трактористсем кăçалхи ĕç планне 120 процент тултарассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

С. Смирнов юлташ ертсе пыракан бригадăри машиновед Т. Шбанов юлташ молотилкăпа авăн çапмалли çулталăкри плана 65 процент тултарнă. Çавăн пекех Токарев бригадинчи Максимов машиновед та лайăх ĕçлет.

МТС çак çитĕнӳсене комбайнерсемпе трактористсем хушшинчи социализмла ăмăртăва анлăн сарса янипе тума пултарчĕ.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Çĕрпӳ МТС çĕртме тумалли плана тултарнă

ÇĔРПӲ, октябрĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Паянхи кун тĕлне МТС 1820 гектар кĕрхи çĕртме сухи туса хăйĕн планне 101 процент тултарчĕ.

Иванов юлташ ертсе пыракан бригада 160 гектар вырăнне 270 гектар, Степанов ертсе пыракан бригада 235 гектар сухаласа хăйсен планĕсене ирттерсе тултарчĕç.

Тимофеева, Андреева, Гаврилов трактористсем те хăйсен заданийĕсене ирттерсе тултарчĕç. Çĕртме тăвасси малалла та анăçлă пырать.

В. КЛЕМЕНТЬЕВА,
МТС-ăн старши агрономĕ.

Малта пыракан ял Советĕнче

ИШЛЕЙ. Анаткас Марка ял Советĕнчи колхозсем тырпул пухса кĕртес ĕçре малта пыраççĕ. Колхозсем капан хывса пĕтернĕ тата государствăна тырă памалли плана тултарнă.

Колхозсем тĕштырăсемпе пĕрлех техникăллă культурăсене те пухса пĕтернĕ. «Правда» колхоз 9,6 гектар кантăра татса шыва хутрĕ.

Колхозсенче халĕ çĕрулми кăларса ăна государствăна параççĕ. Çак кунсенчех «Ново Марково» тата «Правда» колхоз та государствăна çĕрулми парса татаççĕ.

Ял Советĕнчи колхозсенче выльăх-чĕрлĕхе ăшă та çутă çурт-йĕрсенче усрассишĕн тăрăшаççĕ. «Красноармеец» колхоз путек, пăру тата сысна витисем туса лартрĕ.

«Правда» колхозра ку тĕлĕшпе пысăк çитменлĕх пур-ха. Кунта иртнĕ çулсенчех сысна витине мăкласа лартнă, анчах вăл тăррине витмен пирки çумăр айĕнче çĕрсе ларать. Районра ытти ĕçсемпе малта пыракан колхоза выльăх-чĕрлĕх çинчен шутламанни пачах килĕшмест.

П. ЯКОВЛЕВ.

Пăтрапчăк шывра пулă тытакансем

Красноармейски районри «Большевик» колхоз юлашки çулсенче начар колхозсен шутĕнче пулман. Вăл государство умĕнчи пур тĕрлĕ обязательствăсене те вăхăтра татса пынă. Колхоз председателĕ Абрамов юлташ, малтанхи çитĕнӳсемпе мăн кăмăлланса, хăйĕн ĕçне япăх туса пыма пуçларĕ, колхозри ĕç юхăнса пыма тытăнчĕ. Вăл кăна мар, Абрамов тĕрĕс мар çул çине те тăчĕ. Иртнĕ çул колхозăн государствăна тырă парса татнă, вăрлăх фондне хывнă тата выльăх-чĕрлĕх валли кирлĕ фондсене уйăрнă хыççăн, колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх 1,6 килограмм тĕштырă валеçмеллеччĕ. Çак тырра колхозниксенчен 67 процентĕ кăна илме пултарчĕ. Колхозниксене памалли ытти тырă кĕлетрех пĕтнĕ.

Колхоз председателĕ Абрамов тата счетовод Тимофеев, пăтрапчăк шывра пулă тытма лайăх тесе, учет ĕçне юриех япăхтарса янă. Çавна пула çак пуçлăхсем чăнласах усă курма пултарнă вара. Лашасем валли утă илмелле тесе, вĕсем пĕтĕмĕн чухлĕ тырă сутрĕç. Суя документсем çырса хучĕç. Ревизи тунă хыççăн 200 пăт ытла тырă тухманни палăрчĕ. Абрамовпа Тимофеев хăраса ӳкмерĕç. Иккĕмĕш эрне иртсен вĕсем комбайнпа тата молотилкăпа çапнă тырра алламасăр кĕртнĕ тесе акт çырнă. Çапла вара икçĕр пăт тырă та часах тупăннă. Тепĕр хут ревизи тусан, кĕлетри тырă 100 пăт ытларах тухнă. Çакă вара колхоз председательне Абрамова та, ревизи комисси председательне Ильина та тĕлĕнтернĕ, вĕсем пĕри те нимĕнле акт та çырман, нимĕн те шарламан.—Шавлас мар, халăха пăлхатас мар,—тенĕ вĕсем.

Кăçалхи ялхуçалăх çулне «Большевик» колхоз начар хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Тырпул пухса кĕртес ĕç çав тери вăрăма тăсăлчĕ. Абрамов, тырă вырса пухас ĕçе кирлĕ пек организацилес вырăнне, суя сведенисем пама тытăннă. Вăл пĕр шутламасăрах, сентябрĕн 20-мĕшне тырă вырса, сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне капан хывса пĕтертĕмĕр, тесе сведени парать. Анчах та кунта паянхи кун тĕлне те 20 гектар тырра вырса пĕтермен. Çапла, çак тырра пĕр уйăх хушшинче те вырса пĕтермен тата ăна вырса пухма та шутламан. Вăл тырă пĕтĕмпех тăканса пĕтнĕ. Халĕ кунта пушă пучахлă тырра, кусран сухатас тесе, вырма тытăннă.

Районри чылай колхозсем государствăна тырă парса татрĕç. Анчах Абрамов государствăна тырă парса татасси çинчен шутламасть, вăл базарсем тăрăх усăллăм туса çӳрет. Паянхи куна колхозăн государствăна 826 центнер тырă памалла. Абрамов кӳршĕри колхозсене кайса «Большевик» колхозшăн тырă пама договор тăвать. «Большевик» колхоз вара хăйшĕн тырă леçекен колхозсене 5-шер процент тырă хушса пама пулать.

Йĕпреçри маслозавод машинине тырă турттармалла пулать, тесе Абрамов, маслозавод представителĕне колхоз фермипчен 16 килограмм туртакан 3 сысна çури, пĕр тонна купăста тата ытти япаласем те туянтарса ярать. Анчах машинăпа государствăна пĕр килограмм та тырă леçмен.

Калинино районĕнчи Хурапыр колхозне сырма цĕвелеме çапă кирлĕ пулнă. Çак колхозăн шыв арманĕн заведующийĕ пĕр четверт эрех илсе пырса Абрамовпа Тимофеева ĕçтернĕ те, колхоз вăрманĕнчен 12 лав çапă турттарса кайнă.

Абрамовпа Тимофеевăн йĕркесĕрлĕхсем татах та нумай. Хăшпĕрисем çинчен райисполкомра тата районри прокуратурăра та пĕлеççĕ, анчах Абрамова çавăн пек пиревсĕр ĕçсемшĕн ответ тыттарманни пачах тĕлĕнтерет

А. КАРАЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

ФИНАНС ПЛАННЕ ТУЛТАРАССИШĔН ПЫРАКАН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĂН 1945 ÇУЛХИ III-МĔШ КВАРТАЛ ИТОГĔСЕМ

Чăваш АССР Совнаркомĕ финанс планне тултарассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăвăн 1945 çулхи III-мĕш квартал итогĕсене пăхса тухса çакна палăртнă:

Çĕрпӳ районĕнчи финанс пайне (финанс пайĕн заведующийĕ Петров юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Хабаров юлташ), кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана 132,6 процент тултарнăшăн, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 15.000 тенкĕ преми пама йышăннă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи финанс пайне (финанс пайĕн заведующийĕ Анкудинов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Маклашкин юлташ), финанс планне 117,7 процент тултарнăшăн, 10.000 тенкĕ преми пама йышăннă.

Вăрмар районĕнчи финанс пайне (финанс пайĕн заведующийĕ Яковлев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Биктемиров юлташ), финанс планне 112,2 процент тултарнăшăн, 5.000 тенкĕ преми пама йышăннă.

Муркаш, Октябрьски районсем тата Шупашкар хули тăрăх кварталти финанс планне тултарас тĕлĕшпе лайăх ĕçленине палăртнă.

Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Кувакино, Пăрачкав, Первомайски, Советски, Чкаловски, Комсомольски, Йĕпреç тата Шупашкар районĕсем тăрăх финанс планне тултарас тĕлĕшпе япăх ĕçленине палăртнă

Отечественнăй вăрçăра пулнă çынсен çемьисене паракан çăмăллăхсем

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ вăрçăра вилнĕ воинсен, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен, çар çыннисен тата Хĕрлĕ Çартан киле таврăннисен çемьисене памалли çĕнĕ çăмăллăхсем çинчен тата вĕсене материальнăй пулăшу парасси çинчен постановлени йышăннă.

Отечественнăй вăрçă фронтĕнче çемьене тăрантарса пурăнаканни вилнĕ пулсан тата Отечественнăй вăрçăра аманса пĕррмĕш е иккĕмĕш группăри инвалид пулса юлнă пулсан, çавăн пек хуçалăхсене вара ялхуçалăх налогĕ, обязательнăй страховани тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсене памалли иртнĕ çулсенчи пур парăмсене те каçараççĕ.

Отечественнăй вăрçă фронтĕнче вилнĕ çынсен ачисенчен тата Отечественнăй вăрçăра аманса пĕррмĕш е иккĕмĕш группăри инвалид пулса юлнă çынсен ачисенчен вăтам шкулăн 8—10-мĕш класĕсенче, аслă шкулсенче тата техникумсенче вĕреннĕшĕн укçа илмеççĕ.

Отечественнăй вăрçă фронтĕнче вилнĕ çынсен çемьисем Хĕрлĕ Çарта тăракан çар çыннисен çемьисене паракан пур çăмăллăхсемпе те—налогсем, обязательнăй йĕркепе ялхуçалăх продукчĕсем парасси, хваттер укçи тата ытти тĕлĕшпе те—1946 çул пĕтиччен усă кураççĕ.

Отечественнăй вăрçă фронтĕнче амакса пĕррмĕш е иккĕмĕш группăри инвалид пулса юлнă çынсен хуçалăхĕсене ялхуçалăх налогĕ тăрăх тата обязательнăй йĕркепе государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парасси тăрăх çĕнĕрен çăмăллăхсем памалла тунă.

СССР Совнаркомĕ Комбанка вилнĕ воинсен, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен тата çар çыннисен çемьисене çурт-йĕрсем тума е юсама 5.000-рен пуçласа 10.000 тенке çитиччен 5—10 çуллăха кивçен укçа пама хушнă. Республикăсенчи Совнаркомсен тата крайсемпе облаçсенчи исполкомсен çавăн пек çынсене строительство вăрманĕ касса хатĕрлемешкĕн тӳлевсĕр вăрман участокĕ уйăрса памалла тата çуртсем тума е юсама вырăнти строительство материалĕсене йышăннă хакпа памалла.

Районсенчи исполкомсене 1945—46 çулсенче хăйсене валли вутă хатĕрлекен çар çыннисен, Хĕрлĕ Çартан таврăннисен, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен тата вăрçăра вилнĕ воинсен çемьисене вутăшăн тӳлемелли хака 50 процент таран чакарма, уйрăм тĕслĕхсенче пачах та тӳлевсĕр вутă пама ирĕк панă.

Наркоматсемпе ведомствăсен çĕнĕрен тунă е юсаса йĕркеленĕ мĕнпур çуртсенчи хваттерсен 10 процентне вырăнти исполкомсен аллине памалла. Çав хваттерсене вара Хĕрлĕ Çартан таврăннисене, çар çыннисен çемьисене, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене тата вăрçăра вилнĕ воинсен çемьисене вырнаçтармалла.

Предприятисемпе учрежденисен директорĕсен, вĕсен ОРС-сем пулсан, вилнĕ воинсен государствăран пенси илсе пурăнакан членĕсене, çав воинсем ĕлĕк çав предприятире е учрежденире ĕçленĕ пулсан, рабочисемпе служащисен çемьисемпе пĕртанах снабжени парса тăмалла.

(ТАСС).

ПРОФОРГАНИЗАЦИСЕН АЧАСЕМШĔН ТĂРĂШМАЛЛА

ВЦСПС секретариачĕ промышленность предприятийĕсем çумĕнче ача çурчĕсем тăвас ĕçе профсоюз организацийĕсем хутшăнмалли çинчен постановлени йышăннă.

Ача çурчĕсене, чи малтан, çав предприятире ĕçленĕ, анчах Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче вилнĕ çынсен ачисем валли тата пулăшма тивĕçлĕ йышлă çемьеллĕ çынсен ачисем валли организацилемелле.

Профсоюзсен Центральнăй Комитечĕсене мĕнле предприятисенче ача çурчĕсем уçмаллине наркоматсемпе пĕрле 1945 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕччен палăртса хума тата çав ача çурчĕсене миçе ача илмеллине палăртма хушнă. Профсоюз организацийĕсен ача çурчĕсем тăвас ĕçе активлăн хутшăнмалла. Предприятисен директорĕсемпе пĕрле çав ача çурчĕсем валли юрăхлă çуртсем тупса хумалла; вĕсем валли инвентарь, сĕтел-пукан, кровaтьсем тата тумтир вăхăтра хатĕрлеттермелле. Профсоюз организацийĕсен ача çурчĕсенче ĕçлеме пултаракан воспитательсене тупса хурас ĕçе те хутшăнмалла.

Профсоюзсене предприятисенчи ача çурчĕсен воспитанникĕсене воспитани парас, вĕрентес тата пурнăçра пулăшас тĕлĕшпе тăтăшах ĕçлесе тăма хушнă.

Тăлăх ачасем валли предприятисенче профсоюзсем пуçарнипе уçнă ача çурчĕсене октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче хуçалăх организацийĕсен аллине памалла.

ХУДОЖНИКСЕН КĔРХИ ВЫСТАВКИ

Чăваш художникĕсен союзĕ кĕрхи выставка тума хатĕрленет. Вăл Октябрь уявĕн кунĕсенче уçăлмалла. Выставкăра пулмалли çĕнĕ произведенисенчен Н. Сверчковăн «Горький—грузчик», П. Сизовăн «Çартан таврăнакансене кĕтсе илни» ятлă пысăк картинисене тата М. Спиридонов, Фролов, Григорьев, Данилов, Поманская художниксен этюдĕсемпе графикăллă ĕçĕсене палăртмалла.

Машинист Настя

1938 çул. Октябрь уйăхĕн юлашки кунĕсем. Кĕрхи сиве çилсем вĕрнипе йывăçсем сарăхса кайнă çулçисене çĕре вĕçе-вĕçе ÿкеççĕ. Час-часах кĕрхи çумăрсем çукаласçĕ.

Канашри депо умне 7091 номерлĕ илемлĕ те пысăкскер паровоз хашлатса çитсе ларчĕ. Паровоз çинчен 26 çулхи чăваш хĕрарăмĕ анчĕ.

Унăн сулă вараланнă çипуççе курсан, вăл мĕнле ĕçре ĕçлени часах тавçăрса илме пулать. Депо умĕнче начальник тата ытти рабочисем ăна кĕтсе илеççĕ. Хĕрарăм васкасах вĕсем патнелле утă.

— Ну, Настя, кочегарта лайăх ĕçленĕшĕн сана машинист помощникне пулма вĕренме яратпăр, — тенĕ ăна депо начальникĕ. Настя ку самантсене питĕ хĕпĕртенĕ, хăй мĕн илтнине хăй те ĕненесшĕн пулман. Çапах та çавăнпа та лăртман пек туса:

— Тавтапуç сире, начальник юлташ, манăн ĕçе çавăн пек хакланăшăн,—тенĕ вăл кулкаласа.

Çак кун Настьăшăн питĕ те савăнăçлă кун пулнă. Кăçхине çывăрма выртсан та чылайччен ыйхă килмен. Унăн пуçне темĕн тĕрлĕ шухăшсем кĕнĕ. «Сук, эпĕ хĕрарăм, çитменнине тата чăваш хĕрарăмĕ, манран машинист помощникĕ пулайăп-ши,—иккĕленнĕ вăл.

Тепĕр кунне ирех Настя Муром хулине тухса кайнă...

Ултă уйăх иртнĕ хыççăн Настя курсран машинист помощникĕ пулса тухнă. Ĕçлеме вăл Канаш хулине таврăннă. Малтанах ку ĕç Настьăшăн йывăр пек туйăннă. Вăл хăйĕн ĕçре аслă юлташĕсем—машинистсем вĕренет. Настя паровоза çав териех тасан тытать, пĕр аварисĕр ĕçлетет, кăмрăк перекетлет. Производствăра лайăх ĕçленипе пĕрлех Настя хăйĕн пĕлĕвне те ÿстерес тесе ĕçлерĕ. 1939 çулта вăл парти кандидатне кĕрет. Лайăх ĕçленине кура ăна депори профсоюзсен ĕç комитечĕ членне суйлаççĕ. 1944 çулта вара Настя Уткина юлташа Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Хисеплĕ Грамота парса наградăланă.

Çак çул депо руководстви ăна машиниста вĕренме янă. Ĕçре пиçĕхсе, аталанса çитнĕ Настя халĕ текех шикленсе иккеленсе тăман. Вăл васкавлăн пуçтарăннă та хĕпĕртесе Улатăра вĕренме тухса кайнă. Курсра вĕренме çăмăлах пулман, анчах та Настя йывăрлăхсене çĕнтерме пĕлнĕ. Пилĕк уйăхран вăл машинист пулса тухнă, каллех Канаша таврăннă.

Çапла вара, Настя машинист пулса тăнă.

Анастасия Степановна Уткина хăйĕн ачалăхне Муркаш районĕнчи Мулкачкасси ялĕнче ирттернĕ. Унтах вăл çуралнă, ÿснĕ, вĕреннĕ.

Вунсакăр çула çитсен Настя Вăрнарти фосфорит заводне ĕçлеме кĕнĕ. Кунта вăл малтанах столовăйĕнче официанткăра пулса ĕçленĕ. Çак ĕçре тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн ăна Чăваш АССР Тĕп Ĕçтăвком членне суйланă.

Столовăйĕнче виçĕ çул хушши ĕçленĕ хыççăн Настьăна ĕçлеме ятне курса. Çамрăк хĕрарăма хастарлăх пехра те часах туп пулнă. Вăл грузчик пулса, çакăр çисе хушшинче кунсерен 60—70 тонна фосфорит тăпри турттарнă.

1937 çулта Настя Канаш хулине, паровоз депона ĕçлеме кĕнĕ. Кунта та вăл грузчик пулнă. Ĕç йывăр пулсан та, Настя паха тĕслĕхсем кăтартнă.

Халĕ Настя 7091 номерлĕ паровоз çинче машинист пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн паровозне хозрасчет йĕркипе ĕçлеттерет. Савна пула вăл июль уйăхĕнче паровоз çинчен тивĕçлĕ ремонтсем сĕрмели çу тавраш 890 тенкĕлĕх ытла перекетленĕ. Хăйĕн бригадипе пĕрле 5.000 килограм яхăн топливо перекетлесе хăварнă.

Настя Аслă Сĕнтерĕ ячĕпе ыраккан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă, унăн паровозĕ 5745 номерлĕ паровозпа ăмăртса ĕçлет.

Пĕр бракăр, пĕр аварисĕр ĕçлес. Пассажирсене техника пахалăхĕ енчен те, тасалăх енчен те лайăх тытас. Паровоз çинчи пур ĕçсене те Ленин мелĕсемпе ĕçлес тесе пулас. Топливăна 10 процент ытла перекетлес—çакăн пек тĕллев лартнă хăйĕн умне Настя. Çав ĕмĕтсене пурнăçлас тесе вăл хăйĕн бригадине ăмăртăва ĕçлеме вĕрентет...сем.

— Пирĕн чаплă ĕç Тăван çĕршыв вăйхăватне ÿстертĕр!—тет Настя машинист хăйĕн бригадинчи рабочисене.

Владимир ПЕРМЕК.

Колхоз пурнăçĕн илемĕ

ВĂРНАР. Хирпуçĕнчи «Победа» колхоз районри малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланса тăрать. Кунта темиçе çул хушши ĕнтĕ председатель пулса «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль илнĕ коммунист П. Андреев юлташ ертсе пырать.

Тÿрĕ кăмăлпа ĕçленине пула «Победа» колхоз членĕсем çулран çул пысăк тухăçлă тырпул туса илеççĕ. Пуян та культурăллă пурăнаççĕ кунти колхозниксемпе колхозницăсем. Вĕсем пуян пурнăç пĕр тырпул нумай туса илнипе çеç пулманнине те ăнланаççĕ.

— Эпир тырпул нумай туса илнипе тутă пурăнатпăр. анчах пирĕн колхоз пурнăçĕн илемĕ—сад çук. Сад туса çимĕç илме пуçласан, вара вăл чăн-чăн колхозăн илемĕ пулать,—тет колхозри малта пыракан колхозник Отечественнăй вăрçă инваличĕ Павел Егоров юлташ.

Çапла П. Егоров юлташ пуçарнипе кунта вăрçă вăхăтĕнчех 2 гектар сад хывса хăварнăччĕ. Унта 300 тĕп улмуççи лартнă, 500 тĕп çамрăк улмуççи ÿстереççĕ.

Халĕ сад ĕçĕн çирĕмкунлăхне хутшăнса, колхоз садне 8 гектара çитерме палăртнă. Ăна валли акăнмасăр выртакан тăвайкиллĕ çĕре суйласа илнĕ. Çапла кăçал çĕнĕрен 5 гектар çине 500 тĕп улмуççи тата тепĕр гектар çине 2500 тĕп хăмла çырлипе 100 тĕп чей çырли йывăççи лартса хăвараççĕ. Ку тĕлĕшпе П. Егоров тăрăшса ĕçлет.

Кăçалтан пуçласа колхоз сачĕ 8 гектара çитет.

Е. ВОЛКОВ.

Çĕрĕç пайĕ „кăтартусем" панă...

ÇĔМĔРЛЕ. Нумай колхозсенче 1940—41-мĕш çулччен лайăх садсем пулнă, анчах вĕсене сивĕсем пĕтерсе лартнă. Çапах та хăшпĕр колхозсенче ку тĕлĕшпе ĕçлеме чарăнман. Ленин ячĕпе тăракан колхозри садовод-мичуринец Н. Карпов тăрăшса ĕçленипе сада тепĕр хут чĕртсе ĕрчетме тытăннă Хальхи вăхăтра 15 гектар çинче 1600 улмуççи ÿсет. Кунсăр пуçне хăмла çырли, хурлăхан тата çĕр çырли сутса колхоз кашни çулах пысăк тупăш илет.

Кунтах пĕр гектар çинчи питомникре кĕркунне лартмалли хунав йывăççисем ытти колхозсене сутмалăх та пур.

Çавăн пекех «Ударник», «Большевик», «Новая жизнь», «14 лет Октября» тата «Волга» колхозсенче те садсем ĕрчетеççĕ.

Анчах районĕпе те ултă колхозра кăна садсемпе çырла-çимĕç йывăççисем пурри пачах та çителĕксĕр. Ытти колхозсем, шкулсем, учрежденисемпе предприятисем садсене çĕнĕрен чĕртес тата юлашки çулсенче лартнă çамрăк садсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. Район çуркунне çимĕç йывăççисем лартмалли плана тултарман. Ку мĕншĕн çапла пулнă-ха? Мĕншĕн тесен районри çĕрĕç пайĕ хăй те садсем ĕрчетесси çине çавăрăнса пăхмасть, ăна иккĕмĕш вырăнта тăракан ĕç вырăнне хурать. Çак кунсенче эпир çĕрĕç пайĕн агрономĕнчен: октябрĕн 1-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче çĕнĕ садсем лартас çирĕмкунлăха ирттерес тĕлĕшпе мĕн турăр, тесе ыйтрăмăр.

— Колхозсене кăтартусем пама хатĕрленетпĕр,—терĕ çĕрĕç пайĕн агрономĕ.

Çакăн пирки те ĕнтĕ Çĕмĕрле районĕ пур ĕçре те кая юлса пырать.

Ăнланас пулать: ялхуçалăхĕнчи мĕн пур ĕçсене, вăл шутра садсем лартса ĕрчетес ĕçе те, пĕр вăхăтра туса пымалла.

Çĕмĕрле районĕ те пуян та чаплă садсен районĕ пулма пултарать тата пулмалла та.

Ан. ТАНЬКОВ.

Сад пахчи тăваççĕ

Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозра сад пахчи тума тытăннă, Çак ĕçе йĕркелеме кунта Хĕрлĕ Çартан таврăннă С. Захаров юлташ кăçал 500 тĕп груша йывăççи лартса хăварма шутлать. Лартмалли йывăççене вăл пĕтĕмпех питомникрен кÿрсе килчĕ.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн ĕçĕсем çинчен Англи парламентĕнче каласа кăтартасси

ЛОНДОН, октябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçатăн политика обозревателĕ çапла çырать: Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн сессийĕн ĕçĕсем çинчен общинăсен палатинче октябрĕн 9-мĕшĕнче парламент пуçхăпсан часах каласа кăтартмалла. Обозреватель шухăшланă тăрăх, ăна Эттли каласа кăтартать пулмалла.

Обозреватель çапла шутлать: правительство лордсен палатинче те Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн сессийĕн ĕçĕсем çинчен çак çитес кунсенчех каласа памалла.

ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔН СЕССИЙĔ ПĔТНИ ÇИНЧЕН АНГЛИ ХАÇАЧĔСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). «Ивнинг Стандарт» хаçатăн редакци çырнă статьинче çапла каланă: конференци пĕтсе ларни «пите пăшăрхантарать, анчах та вăл катастрофа пулса тăмасть... Министрсем мĕн çинчен тĕрлĕ шухăшланине пĕлнĕ пулсан, ыйтусене палăртнă пулсан, çакă вăл пĕрлĕх тупас ĕçре пĕр тапхăр ĕçлĕсе ирттернине пĕлтерет».

Вăрçă вăхăтĕнче союзниксем ялан пĕрлĕхлĕ пулнине аса илсе, хаçат çапла çырать: «Хăйĕн тĕп тĕллевне пурнăçа кĕртнĕ хыççăн çав пĕрлĕх малалла та тытăнса тăрĕ тесе суккăр оптимиссемсĕр пуçне урăх никам та шутлама пултарайман. Кашни халăх хăйĕн туртăмĕсемпе шухăшĕсене хăйĕн йăлисемпе интересĕсем кăтартса панă тăрăх палăртмалла. Çавсене пĕр-пĕринпе килĕштерсе пырса ĕнтĕ мир тумалла. Çав задача çăмăл мар, анчах та ăна пурнăçа кĕртме пулать... Çăннипе хăрушлăх кунта Лондонри калаçусем пĕтсе ларнăшăн пĕр Россиăна кăна айăплама тăрăшакан çынсем тĕрлĕ хыпарсем сарнинче.

Лондонра кăçхи хаçатсем пĕррĕмĕш страницăра Бирнс патĕнче тата В. М. Молотов патĕнче пулнă пресс-конференцисем çинчен пĕлтернисене юнашар пичетленĕ. Хаçатсем Бирнспа В. М. Молотовăн октябрĕн 3-мĕшĕнче ирхине ÿкернĕ пысăк сăнĕсене пичетленĕ.

Хаçатсем пурте В. М. Молотовăн конференци ĕçне малалла хускатса ярас шутпа панă сĕнĕвне пичетленĕ. Кăçхи хаçатсен юлашки кăларăмĕсенче Молотовпа Бирнсăн пресс-конференцире ÿкернĕ сăнĕсене пичетленĕ.

ЛОНДОН, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Темиçе хаçат Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн пĕррĕмĕш сессийĕ пĕтни çинчен калакан статьясене иккĕмĕш вырăнта пичетлесе кăларнă. Сесси нимĕн те пĕлмесĕр, вĕçленмесĕр, пĕлтернĕ. Ытти шухăшсем те тасатнă. Пĕр шăпа сăмахĕсене хаçатсем ăнланнă ытла.

Обзорсем эпир ыйтусем ĕçĕсен ыйтусене шыраса... ыйтусене хĕвелтухăçнĕ Европа...

ыйтăнмаршăн айăпа, ĕлĕкхи пекех, Совет Союзе çине ивантарма хатланаççĕ, анчах та хаçатсем халь ун çинчен ĕлĕкхинчен йăвашрах çыраççĕ, вĕсем пуринчен ытла халь союзниксене пĕрле пурăнтармалли практикăллă формăна тупма кирли çинчен çыраççĕ. Çак шухăша «Таймс» хаçатăн редакци çырнă статьинче пĕрлештерсе каланă. Унта çапла çырнă: «Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен ĕçĕ пĕтсе ларни çинчен пĕлтернине Англире никам та тенĕ пекех поражени тесе шутласшăн мар, вĕсем палăрнă йывăрлăхсене майлаштарма урăхла майсемпе калаçмалла тесе шутлаççĕ...»

«Дейли уоркер» хаçатăн редакци çырнă статьинче çапла каланă: «Ыйтусене пăхса тухмалли йĕркен йывăрлăхĕсем Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн пĕррĕмĕш сессине пĕтерсе лартрĕç, çав йывăрлăхсем хыçĕнче фашизма вăрçăра пуçĕнех çĕнтерни хыççăн Европăра демократие йĕркелемешкĕн мĕнле политика тытса пымалли çинчен тĕрлĕ шухăшлани историйĕ тăрать. Ыйтусене пăхса тухмалли йĕрке тĕлĕшпе Молотов тĕрĕс шухăшлать пулмалла. Берлинра кăларнă пĕлтерÿре çав ыйтусене мĕнле татса памаллине тĕплĕн кăтартса панă. Апла пулсан, Англипе Америка представителĕсем протоколсене тепĕр хут пăхса тухма Молотов сĕннипе мĕншĕн килĕшмен? Европăра фашизм юлашкийĕсене пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе иккĕленекеннисене Совет правительстви пуçран шăласшăн мар, çакă питĕ паха факт пулса тăрать. Хĕвелтухăç Европăри демократиллĕ çĕнĕ вăйсем, фашистсемпе квислинговецсене пĕтерсе лартса, паха реформăсем туса ирттерчĕç, вĕсене тивĕçлĕ майсемпе пулăшса тăрĕç, анчах та вара хĕвеланăçĕнчи политиксен, хĕвеланăçĕнчи блок тума шухăшлакансен, 1945 çул 1938 çул маррине астуса илмелле пулĕ.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн ĕçĕсем çинчен Америка хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатра государство секретарĕн заместителĕ пулнă Уаллес статья пичетлесе кăларнă. Вăл çапла шутлать: Лондонри калаçусем ăнăçлă пĕтменни, пĕр енчен, опытлă дипломатсем çуккинчен килнĕ, тет. Уаллес çапла калать: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем мирлĕ пурнăç туса хурас тĕлĕшпе ытти правительствăсем мĕнле шухăшланипе паллашмасăрах Лондонри калаçусене пуçласа ячĕç. Çавна пула Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн пĕррĕмĕш сессийĕнче вăхăта ыйтусене мĕнле йĕркепе пăхса тухасси çинчен каласса ирттернĕ. Совет Союзĕ çеç çав калаçусене тĕплĕн хатĕрленсе пынă, вăл çирĕп политикăпа хĕçпăшалланса калаçнă. Çавăнпа та Совет Союзĕ ытти союзниксем хатĕрленсе пыманнинчен усă курма пултарнă.

«Дейли уоркер» хаçатăн редакцийĕ çапла çырать: Лондонри калаçусем ăнăçлăн пĕтменни процедура ыйтăвĕсене тата çавăн пек ытти ыйтусене пĕлсе татманнинчен килмен. Лондонри калаçусем Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Англи Германипе Япони фашизмне пĕтерме панă хăйсен сăмахне пурнăçламан пирки ăнăçсăр пĕтнĕ, тесе çырать.

ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔН СЕССИЙĔ ÇИНЧЕН АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕН КОНГРЕСĔН ЧЛЕНĔСЕМ МĔНЛЕ ШУХĂШЛАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Вашингтонран çапла пĕлтерет: конгресс членĕсем Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн Лондонра пулса иртнĕ ларăвĕсен результачĕсем çинчен пăшăрханса калаççĕ. Анчах та демократсем те, республиканецсем те мирлĕ пурнăçăн никĕсне çĕнĕрен хывма кирлĕ тесе шутлаççĕ.

АРГЕНТИНА ТĔЛĔШПЕ США МĔНЛЕ ПОЗИЦИ ЙЫШĂНСА ТĂНИ ÇИНЧЕН АЧЕСОН КАЛАНИ

САН-ФРАНЦИСКО, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Сан-Францискăри радио çапла пĕлтерет: США государство секретарĕн заместителĕ Ачесон пресс-конференцире çапла каланă: Аргентина правительстви хăйĕн тĕнчери обязательствисене пăсать. Пĕрлешÿллĕ Штатсем Аргентинăри лару-тăру çинчен Америкăри ытти республикăсемпе канашласа пăхĕ, тенĕ.

ВАШИНГТОН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). США-н государство секретарĕн ĕçĕсене туса тăраканĕ Ачесон пресс-конференцире çапла каланă: Аргентинăра юлашки вăхăтра пулса иртнĕ ĕçсем пирки Пĕрлешÿллĕ Штатсем çапла шутлаççĕ: çар енчен пулăшас тĕлĕшпе договор тăвасси çинчен Аргентинăн хальхи правительствипе кирлĕ пек калаçма май пулмасть, теççĕ. Çавăнпа та Пĕрлешÿллĕ Штатсем Бразилие Америкăри государствăсен договорне тăвасси çинчен калаçма Рио-де-Жанейро хулинче октябрĕн 20-мĕшĕнче пуçтармалли конференцине тепĕр срока хăварма сĕннĕ. Ачесон тата çапла каланă: «Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви Аргентинăри лару-тăру пирки Америкăри ытти республикăсемпе канашласа пăхĕ», тенĕ.

ТРУМЭН ПРЕЗИДЕНТ КОНГРЕСА ÇЫРУ ЯНĂ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Трумэн президент пресс-конференцире çапла каланă: эпĕ конгреса çыру ятăм, çав çырура атом энергине тупас ĕçе контроллесе тăмашкăн комисси туса хума сĕнтĕм, тенĕ.

ИРАНРИ ПРОФСОЮЗСЕН РУКОВОДИТЕЛĔСЕНЕ ТĔРМЕРЕН КĂЛАРНĂ

ТЕГЕРАН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Пилĕк кун хушши апат йышăнмасăр пурăннă хыççăн Иранри профсоюзсен паллă деятелĕсене Рустăна тата Шамидэне тĕрмерен кăларнă Сав деятельсен Парижа пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцине каймалла пулнă Власçем вĕсене Парижа кайма парас мар тесе çеç тытса хупнă пуль. тесе шутлаççĕ.

ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

АФИНЫ, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). «Та неа» хаçат Аттика губернаторĕ шалти ĕçсен министерствине çырса панă доклад çинчен пĕлтерет. Çав губернатор правительствăна провинцисенчи çынсем Афины хулине нумай килме пуçлани çинчен асăрхаттарать. çакă вăл провинцисенчен йышлăн тарнă пекех пулса тăчĕ, тет.

Афины хулинче хальхи вăхăтра Греци халăхĕн пиллĕкмĕш пайĕнчен ытларах пухăннă, тесе çырать губернатор. Юлашки вăхăтра, провинцисенче нимĕç оккупацийĕ туса хунă питĕ йывăр условисем пирки, çавăн пекех тата провинцисенче хăрушă пулса тăнă пирки, ялсене çунтара-çунтара янă пирки, çынсене пере-пере вĕлернĕ пирки, суту-илĕве йĕркерен кăларнă пирки, çĕре ĕçлеме май çук пирки тата выçлăх пирки, Афины хулине çынсем тата ытларах тарса пыма пуçланă. Çакăн пирки ялсенче ĕç йăлтах чарăнса ларма пултарать. Губернатор правительствăна Афины хулине тарса пынă çынсене унтан каялла ярас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма, ялти çынсене «пурăнма юрăхлă условисем» туса пама сĕнет.

«Элефтерия» хаçат, çав доклад çинчен каланă май, çынсем Афины хулине тарса пынине, чи малтан, провинцисенче монархистсем террор туса пурăннипе ăнлантарса парать.

АЛБАНИРИ УЧРЕДИТЕЛЬНĂЙ ПУХĂВА ХĂÇАН СУЙЛАССИ

БЕЛГРАД, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Тиранăран пĕлтернĕ тăрăх, Албанири учредительнăй пухăва 1945 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче суйламалла. Кунта центрти суйлав комиссине туса хунă.

МАКАРТУР ГЕНЕРАЛ ЯПОНИРЕ ПОЛИТИКА ТĔЛĔШПЕ ХУПСА ЛАРТНĂ ÇЫНСЕНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРМА ХУШНĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 4-мĕшĕнче Макартур генерал приказ панă. Çав приказ тăрăх, Японире политика тĕлĕшпе хупса лартнă çынсене пурне те ирĕке кăлармалла, граждансен ирĕклĕхне хĕсекен законсене пурне те пăрахăçа кăлармалла, шухăшсене контроллесе тăрас тĕлĕшпе ĕçленĕ полицие салатса ямалла.

Верховнăй командующи Японин шалти ĕçсен министрне вырăнтан кăларма хушнă.

АБЭ ГЕНЕРАЛПА ТОГОНА ТЫТСА ХУПНĂ

ТОКИО, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Корея генерал-губернаторĕ пулнă Абэ генерал тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Того вăрçă преступникĕсен списокĕнче тăнă. Союзниксен влаçĕсем панă приказ тăрăх, вĕсем иккĕшĕ те американецсен 8-мĕш çарĕн военнăй полицине пынă.

ЯПОНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Токио хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: октябрĕн 5-мĕшĕнче премьер-министр принц Хигасикуни мĕнпур министрсемпе пĕрле вырăнтан тухнă.

Премьер-министрăн секретарĕ çапла каланă: правительство вырăнтан тухни Макартур генерал шалти ĕçсен министрне Ивао Ямадзакие вырăнтан кăларма хушнинчен килет, тенĕ.

АНГЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙСЕНЕ ÇАРТАН ЯМА ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин ĕçпе напи повинноçĕн министрĕ Айзекс Англи правительстви хĕçпăшаллă вăйсене çартан киле яма йышăнни çинчен каланă: 1946 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне 3 миллион çынтан кая мар киле ямалла, тенĕ. Айзекс каланă тăрăх, çакна пурнăçа кĕртесси пуринчен ытла транспорт епле ĕçленинчен килет.

ПОЛЬША ГРАЖДАНĔСЕНЕ ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕН КИЛЕ ТАВĂРНИ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Польпресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх. Эйзенхауэр генералăн представителĕ Буд генерал Варшавăна пынă. Унта вăл Польша правительствин генеральнăй уполномоченнăйĕпе пĕрле Польша гражданĕсене ют çĕршывсенчен киле ярас ыйтăва сÿтсе-явнă. Йышăннă решени тăрăх, октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, Польшăна куллен 6.000 çын таврăнмалла.

Ответлă редактор заместителĕ **Н. С. СТЕПАНОВ.**

1945 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче каçхине 8 сехетре Шупашкарта Наркомфин çуртĕнче

Перекет кассисене хунă вкладсем тăрăх вылляв пулать.

Вылявлă вкладсен счечĕсем камăн пур, çавсем пурте вылява хутшăнаççĕ.

Вылявлă вкладсен счечĕсен кашни 1000 номерĕ пуçне 25 выигрыш выляпать, вĕсенчен пĕр выигрыш иртнĕ çур çул хушшинче перекет кассинче выртнă вылявлă вкладăн 200 процентчĕ чухлĕ, 2 выигрыш—100 процент чухлĕ, 22 выигрыш—50-шар процент чухлĕ пулаççĕ.

Вылявлă вкладсене перекет кассисем пурте йышăнаççĕ. Перекет кассисене вылявлă вкладсем хывăр!

Чăваш АССР-ĕнчи Перекет кассисемпе госкредит управленийĕ.

Донбаса ытларах йывăç ярар

Донбаса хăвăртрах юсаса ура çине тăратма пулăшас тесе, Шăхасан районĕнчи 29 колхоз унта яма вăрман хатĕрлет. Халĕ вăрман хатĕрлес енĕпе плана 32 процент, турттарас енĕпе 18 процент çеç тултарнă.

Ĕçе тĕрĕс организацилененипе пула «Прожектор» колхоз (председателĕ Р. Иванов) вăрман хатĕрлес плана 78 процент тултарнă. «Звезда» колхоз (председателĕ Братыгин) вăрман хатĕрлеме 2 çын, турттарма 2 лав çеç янă. Колхоз вăрман хатĕрлемелли плана 20 процент кăна тултарнă. Вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе уйăрнă уполномоченнăй К. Петрова çакăн пек çитменлĕхсемпе килĕшсе ларать.

Шĕкĕр ял Советĕнчи колхоз председателĕсем Григорьевпа Васильев юлташсем: «Вăрман хатĕрлесси вăл васкавлă ĕç мар, ăна кайран та тума пулать», тесе лараççĕ. «Свет», «Красный трактор», «Красный луч» тата М. Горький, Доронин ячĕсемпе тăракан колхозсем вăрман хатĕрлеме тытăнман та. Районĕпе вăрманта план тăрăх 47 лав тата 45 çын ĕçлемелле, анчах та халĕ кунта пĕтĕмпе те 21 лашапа тата 20 çын çеç ĕçлеççĕ.

Киря лесхозĕн директорĕ Иванов юлташ вăрманта ĕçлекенсене валли пурăнмалли условисем туса паман. Ĕçлекенсем хушшинче политикăллă ĕç те тивĕçлĕ вырăнта мар. Çавна пула вăрман турттаракансем 2,5 кубометр вырăнне 1,5 кубометр çеç турттараççĕ. «Активист» колхозран ĕçлеме пынă çынсем 3 кунтанах каялла таврăннă.

Донбаса хăвăртрах юсаса ура çине тăратас тесен, унта ытларах йывăç ярса памалла. Çавăнпа та вăрман хатĕрлес ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла.

А. АНТОНОВ.

ВУЛАВ ÇУРЧĔ ĔÇЛЕМЕ ТЫТĂНЧĔ

ÇĔРПУ. Тавăшкасси ял Советĕнчи вулав çурчĕ хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Иртнĕ çулсенче вулав çуртĕнче пĕр ванчăк биллиард кăна пулнă, унта çĕнĕ хаçат-журналсем те килсе тăман, вулав çурчĕ пачах ĕçлемен теме те юрать.

Вулав çурчĕн заведующине Хĕрлĕ Çартан таврăннă Николай Николаева лартнă хыççăн, ĕç пĕтĕмпех улшăнчĕ. Вулав çуртĕнче хаçат-журналсемпе кĕнекесем çителĕклĕ, шашка, домино пур. Çавна пула вулав çуртне çÿрекенсен йышĕ те ÿссех пырать.

М. РЯЖЕВ.

Куçа сыватнăшăн тав тăватăп

Эпĕ. Яравайкасси (Советски район) çынни. 1943 çулта манăн сылтăм куç курми пулчĕ те эпĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Упакассинчи куç тухтăрĕ Ф. Е. Тайков патне кайрăм. Вăл мана операци турĕ. Операци хыççăн куç аванах куракан пулчĕ. 1945 çулта тепĕр куçĕ курми пулчĕ, вăл ăна та операци турĕ. Халĕ ĕнтĕ эпĕ аванах куратăп.

Мана çакăн пек лайăх куракан тунăшăн эпĕ куç тухтăрне — Тайков юлташа пĕтĕм чĕререн тав тăватăп.

В. ИВАНОВ.

Подсобнăй хуçалăхсенчи çĕрулмипе пахчаçимĕçе хăвăртрах пухса кĕртер

Промышленность предприятийĕсемпе учрежденийĕсем çумĕнчи подсобнăй хуçалăхсем ĕççыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Ăçта подсобнăй хуçалăх ĕçне лайăх йĕркеленĕ, ăçта обществăллă апатлану тивĕçлĕ вырăнта, унта вара рабочисен ĕç тухăçлăхĕ те пысăк, вĕсем хăйсен производство планне те ăнăçлăн тултарса пыраççĕ.

Республикăри малта пыракан предприятисем подсобнăй хуçалăха аталантарас ĕçе пысăк вырăна хураççĕ. Вĕсем унтан пухса илекен тырпулпа пахчаçимĕçе столовăйсенчи апат пахалăхне лайăхлатнă çĕре яраççĕ.

Челноков тата Якунин юлташсем главнăй инженер пулса ĕçлекен заводсем республикăра производствăра малта пынипе пĕрлех, хăйсен подсобнăй хуçалăхĕсене лайăх йĕркеленипе те паллă пулса тăраççĕ. Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри подсобнăй хуçалăх 285 гектар. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод 156 гектар çĕр лаптăкĕ тытса тăрать. Çак çĕр лаптăкĕпе вĕсем пĕтĕмпех усă кураççĕ. Кăçал Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод 127 гектар тĕштырăсем пухса илсе, государствăна обязательство йĕркипе 2.160 пăт тырă пачĕ. Тĕштырăсемсĕр пуçне кунта 50 гектар çĕрулми, 29 гектар пахчаçимĕç лартса хăварнă, 69 гектар вика тата клевер акнă. Халĕ кунта аван çапаççĕ тата çĕрулми кăлараççĕ, пахчаçимĕç пухса кĕртеççĕ. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне тĕштырăсене пĕтĕмпех пухса пĕтернĕ тата 63 гектар вика çулса пухнă.

Подсобнăй хуçалăхра пурĕ 120 çын ĕçлет. Халĕ вĕсем авăн çапаççĕ, çĕрулми кăлараççĕ. Кунсăр пуçне, 5 гектар кĕрхи тырă акса хăварнă, 65 гектар кĕрхи çĕртме тунă. Çĕрулмипе пахчаçимĕçе хĕлле усрама подсобнăй хуçалăхăн 800 тонна хумаллăх 2 овощехранилище пур. Купăста тăварлама 23-шер тонна кĕрекен бетонланă 4 чан-па 8 йывăç чан пур. Тырпул хумалли складсем те йĕркеллĕ Подсобнăй хуçалăхра ĕçлекенсене кунне 3 хутчен вĕри апат çитереççĕ. Подсобнăй хуçалăх начальникĕ Нестеров тата заводри ОРС начальникĕ А. Каплин хăйсен подсобнăй хуçалăхне вăйлатассишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлеççĕ.

Çавăн пекех Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра та подсобнăй хуçалăх ĕçне çулленех вăйлатса пыраççĕ. Кăçал кунта пурĕ 75 гектар çинчи тырпула çапса, 4044 пăт тырă пухса илнĕ. 3,5 гектар çинчен 350 центнер помидор, хăяр тата ытти пахчаçимĕç илнĕ Халĕ çĕрулми кăлараççĕ тата купăста касаççĕ Гектартан вăтамран 92 центнер çĕрулми тухать.

Тырпула тата çĕрулмипе пахчаçимĕç усрамалли складсемпе овощехранилищесем çителĕклĕ. Ĕçлекенсене валли общежити пур, столовăйĕнче виçĕ хутчен вĕри апат çитереççĕ.

Çĕмĕрле комбиначĕ çумĕнчи подсобнăй хуçалăх та (начальникĕ Подклетнов) лайăх ĕçленипе палăрса тăрать. Хăйсене уйăрса панă 100 гектар çĕр лаптăкĕ çине кунта 37 гектар çĕрулми, 14 гектар тĕрлĕ пахчаçимĕç лартса хăварнă. Акнă тĕштырăсене пĕтĕмĕшпех пухса илсе. государствăна обязательство тăрăх, 3.000 пăт тырă панă. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне 8 гектар çĕрулми, 11,5 гектар купăста, помидор тата ытти пахчаçимĕç пухса илнĕ. Подсобнăй хуçалăхăн 300 тонна çĕрулми хумалăх овощехранилище. 150 тонна купăста тăварламалли каткасем пур. Ĕçлекенсене валли столовăй организациленĕ. Кăçал подсобнăй хуçалăх 132 тонна утă çулса илнĕ. Çак кунсенче кунта пĕтĕм çĕрулмие кăларса пĕтереççĕ.

Канашри «Авангард» промартелĕ те хăйĕн подсобнăй хуçалăхĕнче çулсеренех нумай çĕрулмипе пахчаçимĕç туса илет. Кăçал кунта пухса илнĕ тырпула пĕтĕмпех çапса пĕтерне, çĕрулмие те кăларса пĕтерчĕç.

Анчах хăшпĕр предприятисен руководителĕсем подсобнăй хуçалăхсен ĕçне иккĕмĕш вырăна хураççĕ. Акă Чăвашгражданстрой (управляющийĕ Ермолаева) 22 гектар тĕштырă акса хăварнă, 8 гектар çĕрулми лартнă. Кунта çĕрулмие халĕ те кăларма тытăнман. План тăрăх подсобнăй хуçалăхăн иртнĕ çул 60 гектар акмалла пулнă пулсан, пурĕ те 30 гектар кăна акса хăварнă. Кунта халĕ пĕр центнер тырă та çапман, хăçан авăн çапма тытăнасси те паллă мар, кĕлтене аран-аран турттаркалаççĕ. Подсобнăй хуçалăхра пурĕ те 6 çын кăна ĕçлет. Иртнĕ çул çĕре çемçетмесĕр, ячĕшĕн кăна сухаласа акнă пирки 5 гектар çинчи тулă çав тери япăх çитĕннĕ. Ĕçлекенсем валли столовăй çук. Чăвашгражданстрой управляющийĕ Ермолаева юлташ подсобнăй хуçалăх ĕçĕпе нимĕн те интересленмест.

Кун пек тĕслĕхсем республикăра татах илсе кăтартма пулать. Подсобнăй хуçалăхсен ĕçне япăхтарса янă пирки çав предприятисенче вара обществăллă апатлану та кирлĕ вырăнта тăмасть.

Октябрь уйăхĕ—авăн çапса пĕтермелли тата çĕрулмипе пахчаçимĕç пухса кĕртмелли татăклă уйăх пулса тăрать. Çавăнпа та халĕ çанталăк уяр тăнă чухне пĕтĕм ĕç вăйне çак ĕçсене тума мобилизацилемелле. Подсобнăй хуçалăхсенчи ĕçсем халĕ нихăçанхинчен те лайăх пулса пыччăр. Пĕрисем авăн çапнă çĕрте, теприсем çĕрулмипе пахчаçимĕç пухнă çĕрте ĕçлетчĕр Çĕрулмипе пахчаçимĕç валли овощехранилищесене халех йĕркелесе çитермелле. Уйсăрăн пухса илнĕ çĕрулмипе пахчаçимĕç хĕлле шăнса е çĕрсе пĕтĕç, вара пĕтĕм ĕç ахалех сая кайĕ.

Паллах, подсобнăй хуçалăхсенчи тĕштырăсене тата çĕрулмипе пахчаçимĕçсене ăнăçлăн пухса кĕртни предприятисенчи обществăллă апатлану пахалăхне лайăхлатас ĕçре пысăк пулăшу парĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00418 Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. о. Тираж 16.000 экз.